Спорт хыпарĕсем

# Йĕлтĕр йĕрĕ, Çăварни тата ... юратупа каçару

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).
11 сехетре пĕрремĕш старт пулчĕ. Малтанах шкулсенче вĕренекенсем тĕрлĕ ӳсĕмсенче ăмăртрĕç. 1993-1994 çулсенче çуралнисем хушшинче Анастасия Костинана çитекенни пулмарĕ (Ярапайкасси шкулĕ), çак ӳсĕмри яшсем хушшинче мала Калайкасси шкулĕнчи Алексей Моисеев тухрĕ. Кĕçĕнреххисен дистанцийĕнчи çĕнтерӳçĕсем – Светлана Иванова (Муркаш шкулĕ) тата Евгений Яковлев (Ярапайкасси).

Ял хуçалăх предприятийĕсен, учреждениесемпе организацисен, ытти предприятисен командисем те старта йышлăн тухрĕç. Уйрăммăн илсен, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин командинчи йĕлтĕрçĕсем – В. Ильинапа А. Моисеев – чи хăвăрттисем тата вăйлисем пулчĕç. Ветерансен те хăйсен çĕнтерӳçисем: Р. Соловьева, С. Васильева, Н. Скворцов тата С. Яблочкин.

VIP- чупăва сăнама та интереслĕ пулчĕ. Эпир курма хăнăхнă районти тĕрлĕ структурăсен ертӳçисем 2014 метрлă дистанцие пурте хаваспах парăнтарчĕç. Александр Куликовпа


(«Сывлăх» ФСК директорĕ) Людмила Ковалева (Чуманкасси ял тăрăхĕ) пуринчен те хăвăртрах чупаканнисем пулчĕç.

Командăсем хушшинче çĕнтерӳçĕсем çаксем пулса тăчĕç: Çатраккассинчи вăтам шкул, Кашмашри тĕп шкул, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики.

Йĕркелӳçĕсем çĕнтерӳçĕсемпе призерсене пурне те Е. Андреев сăнне вырнаçтарнă дипломсемпе медальсем, парнесем парса чысларĕç.

Йĕлтĕрçĕсем ăмăртнă вăхăтра уява пуçтарăннисем çунашкасемпе, çунасемпе те катаччи чупрĕç, икерчĕ активсе пăхрĕç, юрă-ташăра, тĕрлĕ вăйăра пĕрле савăнчĕç. Сцена çинчи пултарулăх коллективĕсен илемлĕ юррисене итлесе кăмăллă пулчĕç. Хĕле ăсатса, Çуркуннене кĕтсе илсе Çăварни катемпине те тивертсе çунтарчĕç.

Юратакансем уявра пĕр-пĕрне «чĕресем» парнелеме пултарчĕç. Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн специалисчĕсем тăрăшни нумайăшĕн аллинче сапăр тĕслĕ чĕресем пурринчен курăнчĕ. Ку илемлĕ парнесем те кăмăла çĕклерĕç. «Каçарăр мана», – тесе каласа каçармалли кун пирки те манмарĕç Муркашсем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## «Росгосстрах» ăмăртăва чĕнет


Февралĕн 23-мĕшĕнче, Тăван çĕршыв Хӳтĕлевçисен кунне халалласа, «Росгосстрах» пĕрлешӳвĕн Чăваш Республикинчи филиалĕн кубса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн волейболла выляссипе уçă ăмăрту иртет. Унта хутшăнма предприятисемпе организацисен, учреждениесен арçынсен командисене йыхравлаççĕ.

Çĕнтерӳçĕ командăна кубок, диплом тата хаклă парне кĕтет. Призлă вырăнсене йышăнакансене те парнесемпе дипломсем парса чыслĕç. Чи лайăх вылякан уйрăм спортсменсене ятарлă номинацисенче палăртĕç.

Ăмăрту Муркашри «Сывлăх» ФСКра 10 сехетре пуçланать. Çур сехет маларах вара шăпа яраççĕ.

## «Чапаевăн» парнисемшĕн

Çапла калама хăнăхнă ĕнтĕ Чуманкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх çулсеренех ирттерекен ăмăртăва. Ăна граждан вăрçин геройĕн В.И. Чапаевăн çуралнă кунĕ чухне ирттересси йăла пулнă.

Иртнĕ шăмат кун шкул спортзалне ку тăрăхри 6 команда пуçтарăнчĕ. Программăра волейболла выляссси, кире пуканĕ çĕклесси, шашкăлла выляссси, турник çинчен туртăнасси тата пневматика пăшалĕнчен тĕл пересси пулчĕ. Кунĕпех Чуманкассинчи вăтам шкулăн спортзалĕнчен çын татăлмарĕ. Куракансем те йышлă пулчĕç.

Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи И.Ю. Захаров спортăн кашни енĕпех çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе парнесем парса чысларĕ. Пĕтĕмĕшле вара Отарккă ялĕнчи çамрăксен команди мала тухрĕ. Ик-виçĕ çул каялла шкултан вĕренсе тухнă яшсен волейбол вăййинчи ăсталăхне пурте кăмăлларĕç. Игорь Юрьевич çитес çул çак ăмăртăва спорт тĕсĕсене татах та ытларах кĕртме шантарчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева вара ăмăртăва хутшăннисене саламласа хĕрарăмсен командине ятарлă парнепе хавхалантарчĕ.

## Юнкăра хоккейла вылярĕç

Нарăсăн 13-мĕшĕнче Юнкăри вăтам шкулта пысăк уяв пулчĕ: хоккей площадки хута кайрĕ. Уяв калăпăшĕ еплерех пулни кунта район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, районти хоккей федерацийĕн ертӳçи В.И. Кожанов, район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова, шкулти ĕçсене йĕркелесе пыракан канашăн председателĕ Л.Ю. Тарасова, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.В. Ермаков тата ытти нумай хăна килнинчен уççăнах курăнчĕ.

Хоккей спорчĕ сывлăха çирĕплетет анчах мар, чунри тирпейлĕхе те аталантаракан, çав вăхăтрах команда мĕн иккенне чунпа туйса илме пулăшакан тĕс.

Юнкă шкул директорĕ В.Г. Федоров та спортсменсемпе тренерсем валли кирлĕ условисем туса парассине, масăллă тата çемье спортне аталантарассипе тăрăшассине тĕп тĕллевсем вырăннех хурать. Ачасен сывлăхĕ нимрен те малта пулмаллине каларĕ вăл.

Районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçин Т.А. Антоновап тӳпи те çук мар çак площадкăна хута ярас ĕçре. Центр урлă ĕçпе тивĕçтерсе хоккей курупкине тăвассипе пĕр çын мар тимленĕ. Тăрăшнисене шкул директорĕ Тав хучĕсемпе чысларĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вырăнти депутатсен пухăвĕн депутатне В.В. Михайлова, шкул директорне В.Г. Федорова тата В.В. Крылова пысăк явапăх туйса ĕçленĕшĕн тав турĕ. Спорта чунтан парăннă çынсем пулни витĕм кӳрет çав çакнашкал утăмсене тума. Вĕсене курса ĕнтĕ ачасем те сахал мар тăрăшнă.

Хоккей площадкине уçнă ятпа вара И.В. Воробьев тренер-преподаватель ертсе пыракан çамрăк спортсменсем шорт-трекри çитĕнĕвĕсемпе паллаштарчĕç.

**Н. ШАНДИМИРОВА.**








приборы для ЗРЕНИЯ и ЗДОРОВЬЯ
лечебный аппарат “РЕТОН” 3 500 р.
Остеохондроз, болезни суставов, травмы, ОРЗ
прибор для улучшения зрения (тнп)
Рекомендуется при: катаракте, глаукоме, косоглазии, проходит резь в глазах, “мошки”, прекращаются головные боли, нормализуется внутриглазное давление. 4 500 р.
Имеются противопоказания, проконсультироваться со специалистами.
в продаже **Бальзам Панкова** - 400 руб.
19 февраля с 9 до 10 часов в Районном Доме культуры
товар сертифицирован. реклама. ОГРН 305184129000010 (3412) 51-03-68

Продается газифицированный жилой кирпичный дом с надворными постройками (лачуга газифицирована, амбар, баня, гараж, колодец). Площадь дома 55,2 кв. м. Дорога асфальтирована до дома. Адрес: Чуманкасинское с-п, д. Соляное, ул. Пугачева, 48. Обращаться в любое время. Тел.: 8-927-841-43-55. 2-3.

СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ
от 4 500 до 7 000 руб.
**цифровые** от 7 500 до 10 000 руб.
**усилитель звука** 2 200 руб.
производства: Россия, Германия.
**ультразвуковая стиральная машинка** 1 800 руб.
19 февраля с 9 до 10 часов в Районном Доме культуры
ОГРН 305184129000010. реклама. товар сертифицирован (3412) 51-03-68

Покупаем волосы 19 февраля с 10 до 14 часов в парикмахерской «Ольга», (баня) 2 этаж.
Тел.: 8-927-861-99-91.

Продается автомобиль УАЗ-2206 1995 года выпуска, в исправном состоянии. 50 тыс. рублей.
Тел.: 48-80-01. 2-2.



Пĕлтерӳсем. Объявления

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-6.

Продаю трехкомнатную квартиру в с. Б. Сундырь на 2/2 этаже пан. дома с индивидуальным отоплением, площадью 57 кв. м., с капитальным ремонтом всего дома или меняю на однокомнатную квартиру в г. Чебоксары. Тел.: 8-903-065-38-40. 1-2.

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ «ТРИКОЛОР»
Каждому клиенту – подарок!
Тел.: 8-906-385-29-30, 8-960-302-30-52. 1-6.

Февралĕн 18-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче
«ПЕТРОВ-ШОУ»
*«Кулăшла ку – кулăшла!»*
*(пысăк уяв)*
– Сирĕнпе пĕрле кулăшпа сатира театрĕ.
– Чăваш эстрада çăлтăрĕсем.
– Мыскарасем, шӳтсем.
– «КĂЛТАРМАЧ–ШОУ».
– Аукцион, парнесем.
Хакĕ 100 тенкĕ.
Тел.: 48-74-99, 8-902-249-02-62.
шоумен – ВИКТОР ПЕТРОВ
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ

Продаю муку в/с - 10 руб/кг, 1/с - 8 руб/кг; отруби - 3 руб/кг. Доставка. Тел.: 8-927-860-04-78. 1-2.


- Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:0:294, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 3555 кв. м.;

- Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:0:295, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 4363 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши, ул. Чапаева, д. 59, площадью 34 кв. м., с подвалом, индивидуальное отопление.
Тел.: 8-937-391-39-21, 8-927-855-72-71.

Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, office@ingenercheb.ru, тел.: 63-13-49 выполняются кадастровые работы по выделу земельного участка в счет доли в праве общей собственности из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенного в Чувашской Республике, Моргаушском районе, в границах ранее действовавшего СХПК «Нива», поле № 1, полевой севооборот № 1.

Заказчиком кадастровых работ является Прокопьев Виталий Клементьевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Турикасы, ул. Молодежная, д. 36.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 16, здание сельской администрации «17» марта 2010г. в 11 часов.

С проектом межевых планов земельных участков можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.

Возражения по проекту межевых планов и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с «17» февраля 2010 г. по «17» марта 2010 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов д. 33 а, офис 304.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: участки, находящиеся в общей долевой собственности в границах ранее действовавшего СХПК «Нива», поле № 1, полевой севооборот № 1, земли Большесундырского сельского поселения, 21:17:050801:499, 21:17:050801:526.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.


Вăкăрсем, тынасем, пăрусем, сурăхсем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
принимаем
СБЕРЕЖЕНИЯ
под достойные проценты
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
Св-во гос.рег. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
КПКГ “КАПИТАЛ” работаем с пайщиками


Орининское сельское поселение выражает искреннее соболезнование главе района Иванову Юрию Александровичу, его родным и близким по поводу кончины отца
**ИВАНОВА**
**Александра Ивановича.**

Район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕ, культура ĕçченĕсен районти профсоюз организацийĕ Шетмĕпуçĕнчи ял библиотекин заведующийĕ пулса ĕçлекен В.В. Никитинан мăшăрĕ, Шетмĕпуçĕнчи Культура çурчĕн директорĕнче ĕçленĕ
**Валерий Семенович**
**НИКИТИН**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата сывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерессĕ.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕн администрацийĕ Шетмĕпуçĕнчи библиотекăра ĕçлекен В.В. Никитинан мăшăрĕ, кунта Культура çурчĕн директорĕ пулса ĕçленĕ
**Валерий Семенович**
**НИКИТИН**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата сывăх тăванĕсемпе пĕрле таръннăн хурланса пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 16.02.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3950.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.